Хасатра кăтартнă фактсене курса тăрсах Владимирова парти ретне хăварнала туни, Шупашкар райкомĕн политикăлă сыхлăхăсĕ сукки çинчен калат. Тăшман çине çапла йăваштунăлă пăхни парторганизацин боăшевикла сыхлăхне хăпартма мар, ăна мăкатма çеç пулăшат.

Йăлашкинчен „Колхозник çулĕ" хасат çинчен. Хасат çапла сырат: „Владимиров ĕçне парти райкомĕ питех çийелтен, либерăлла пăхрĕ. Владимиров пăшăрханнине кура, парти райкомĕн уйрăм членĕсем ăна хĕрхенсе хӳтлерĕç". Владимирова хĕрхенсе хӳтлекенсем камсем вĕсем? Хасатăн кунта тăшмана хӳтлекенсенĕн йăнăсене нимĕн имелле тăмасăр пĕтĕм парторганизацине пĕлтермелле пулнă. Анчах вăл çакна тумасть. Çапла вара хăй те йăваш чунлă, хăравăçне палăртат. Çака вăл боăшевикла пичете тивĕçле ĕç мар. Хасатăн вĕçне çитичченех боăшевикла принципла пулмала.

Халăх йурăсем

Аслă Сталина пахалаçа

1. Чĕнтĕрлĕ кĕпер Атăл çинче,
Унăн сăнĕ тăрă шыв çинче.
Аслă Сталин,
Аслă Сталин Мускав хулинче,
Унăн сăнĕ,
Унăн сăнĕ кашнин килĕнче..

2. Аслă улăх симĕс курăнат,
Йур кайса çĕн курăк шатăпран.
Сĕршыв пирĕн,
Сĕршыв пирĕн сат пек курăнат,
Сталин ăна,
Сталин ăна ăшшăн пăхнăран.

3. Кĕтĕмĕр йешĕл сат варрине
Улма-йăваç çеçке çурнă чух.
Тăвансемçе,
Тăвансемçе ӳстернĕ пире
Сталин савăк,
Сталин савăк пурнăç панă чух

4. Шурă акăш курас тен пулсан,
Сутă кӳлĕ хĕрне кайса кур.
Ырă пурнăç,
Ырă пурнăç курас тен пулсан,
Аслă Сталин,
Аслă Сталин чĕнĕ çулпа пыр.

5. Тавах ырă шăпчăк-кайăкне
Уçă сасăлă хитре йурăшĕн.
Сăпаçиба,
Сăпаçиба Аслă Сталинне
Савăк, тулăх,
Савăк, тулăх пурнăç панăшăн.

Н. Йанкас йусаса çырна.

Аттăр, йурлăр савăнса

Аттăр, йурлăр савăнса,
Йурлăр савăç йуррине,
Йуратса та мухтаса
Сталин çинчен хăвăнне.

* * *

Ленинпала Сталин пачĕç
Савăк пурнăç пире,
Пусмăр-асапран хăтарнăç,
Тав, Ленинпа Сталина.

* * *

Çак çĕр çинчи чĕрчуна
Пĕр хĕвел çеç ăшăтат.
Тулăх пурнăç паракан
Сталин йăлтăн çак хĕвел.

* * *

Çурхи йешĕл вăрманта
Шăпчăк сасси йăнăрат.
Сталин тунă Конституци
Чĕрене çăмăртарат.

* * *

Мăн улăхра симĕс утă
Улăхĕпех йешерет.
Савăк, тулăх çĕнĕ пурнăç
Сĕршывĕпех йешерет.

* * *

Шăпчăк кайăк йуррине
Кам итлемĕ вăрманта.
Тулăх пурнăç панăшăн
Кам йуратмĕ Сталина.

* * *

Сыр хĕрринчи сĕрсырли,
Пĕр çункамĕ—пĕр шывăç.
Сталин йăлтăн сăмахни,
Пĕр сăмахĕ—пин ыттăн.

* * *

Шурă çутăр йăрапи
Хаç тĕ арча тĕнчене.
Сталин йăлтăн сăмахăн
Емĕр чĕрен варринче.

* * *

Сăпаçиба Сталинне
Сĕршывăн лур халăха
Асапран хăтарăшăн,
Тулăх пурнăç панăшăн.

АННА МАЛЬШКИНА Çĕрпӳ районĕнчи колхозницăсен йурланă йурăсенчен илтсе сырса илнĕ.

Сталинла Конституци

Хĕрлĕ саттин саппунĕ
Нит килĕшет хĕрсене.
Конституци—сĕн саккун
Савăнтарат чĕрене.

* * *

Чечек сыххи илемлĕ
Тĕрлĕ тĕсли пулнăран.
Конституци пит паха
Пур ӳсĕме сыпăран.

* * *

Симĕс пурăн лентийĕ
Колхоз ялли çилхинче.
Сталин çырнă саккунĕ
Кашни сынăн аллинче.

* * *

Сĕмĕрт çурăлтĕ шап-шурă
Изем кӳрчĕ нахчана.
Çĕнĕ саккун пит ырă,
Емĕр тăрĕ йалкăнса.

* * *

Пирĕн пурнăç пит ырă
Сталин йĕртне пынăран.
Çĕнĕ йурă йурлатăр,
Мухтан, Аслă Сталина.

В. СЕРГЕЕВ Йăлей районĕнчи колхозниксем йурланă йурăсенчен илтсе сырса илнĕ.

Тырпулсене пуçтарса кĕртсе пĕтернĕ

Октябрĕпе 10-мĕшĕнче Сойузри совхозсемпе колхозсем уйăри тырпула выльăха пĕтернĕ. Кăçал пĕтĕм 89 мелйăн та 816 пин гектар вырса пуçтарна.

Авăн çапасси йăлса пырат. Октябрĕпе 10 мĕшĕне авăн çапас плана 76 процент тултарнă.

(ТАСС).

Кĕр тырсисене акассине кĕрхи çĕртме сухалаçси

Октябрĕпе 10-мĕшне кĕр тырсисене Совет Сойузĕнче 33 мĕлйăн та 652 пин гектăр çине акса плана 91 процент тултарнă. Колхозсем плана 92 процент тултарнă. Иртнĕ çул çак вăхăтăх Совет Сойузĕнче плана 93 процент тултарнă.

Кĕрхи çĕртмене сухалаçси малтанхи пекех çителĕкĕсĕр пырат. Октябрĕпе 10-мĕшне Совет Сойузĕне çула 24 мĕлйăн та 363 гектар сухалаçа плана 35 процент тултарнă. Колхозсем плана 36 процент тултарнă.

(ТАСС).

Социалисăм çĕршывĕнче— пĕтĕм тĕнчери чи кĕске ĕçкунĕ

Вунă çул каялла—1927 çулхи октябрĕрен 15 мĕшĕнче—Аслă Пролетарилĕ революцин вунă çул тултарас умĕн, пирĕн промышленнăç рабочисем вăлăн 7 сехетлĕ ĕçкуне тăвасси çинчен ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет манифесне кăларнă. 7 сехетлĕ ĕçкунĕ, манифесе тăрăх, пĕрремĕн пăтатилеткăн вĕçĕ тĕлне пĕтĕмпе пурнăçа кĕрсе çитнĕ. Çĕнтерӳлĕ социализм çĕршывĕ пĕтĕм тĕнчери чи кĕске ĕçкунĕ çинчен пăтăна рассăнĕнчинчен тăвăтă-пилĕк сехет кĕскеçе.

Ĕçкунне кĕскетесси пирĕн Аслă Октябрĕр революцийĕнчĕ хыççăнах пурнăçа кĕме пуçларĕ. 1917 çулхи октябрĕпен 11-мĕшенче пролетари диктатури правительстви сакăр сехетлĕ ĕçкунĕ çинчен декрет кăларчĕ

Кĕске ĕçкунĕпе рабочи класс ĕç тухăçне хăвăрттăн ӳстерме пултарчĕ. Перремĕш пăтатилеткăра ĕç тухăçлăхĕ 41 процент, иккĕмĕш пăтатилеткăн тăватă çулĕ хушшинче 70 процент ӳсрĕ. Совет влаçĕ пулăпаннă иртнĕ 19 çул хушшинче пирĕн ĕç тухăçлăхĕ, 1913 çулхипе танлаштарсан, 3 хут ытла ӳсрĕ.

Ĕçкунĕ кĕске пулнипе, пирĕн çĕршывра рабочи класс хăйĕн пурнăçне тытăнсиппесĕр, лайăхлатса пырат. ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет манифесне кăларнă вăхăтранпа иртнĕ вунă çул хушшинче вăтам çĕкле 4,2 хут ытларах, ĕççăки фончĕсем 1928 çулхи 8,2 мĕлйăрд тенкĕрен 1937 çулта 78,3 мĕлйăрд тенке çитнĕ. Совет Сойузĕнче 1930 çултах ĕçсĕрлĕхе пĕтĕмпех пĕтернĕ.

Социалисăм çĕршывĕнчи рабочи класс ӳссе пысăк вăй пулса тăчĕ. Рабочисемпе служăщăшисен хисепне 26,3 мĕлйун çына çитрĕ.

Капиталисăмла çĕршывсенчи рабочи класс чуралăçра, çук пурнăçра выçăлă-туталă кăна пурăнат. Ăна ĕççĕрлĕх хăратса тăрат. Йăпонире 1937 çулăн йăнăварте ĕçкунĕн вăтам вăхăвĕ 9,78 сехет пулнă. Фашисла Германире ĕççĕр йулнисен шучĕ халĕ 2,5 мĕлйун çынран кайа мар шутламаç. Германире влаçа фашисăм ларнă вăхăтранпа (1933 çул) рабочисен ĕçкуçи питех те чакрĕ.

Пирĕн çĕршывра çичĕ сехетлĕ ĕçкунне -рабочи класăн хăйăр тăшманĕсене хирĕç кĕрешнине пурнăçа кĕртнĕ. Меншевиксем, троцкисем тата сылтăм ӳтăнчăкçĕсем ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çичĕ сехетлĕ ĕçкуне çинчен кăларнă историлĕ мăнфеса хăйăр çиллевне кĕтсе илнĕ. Ирсĕр халăх тăшманĕсем çав историлĕ декрета пурнăçа кĕртеесенне чăрмантарма тăрăшнă. Анчах партипе рабочи класа вăл сăтăрçĕсене тата диверсантсене уçса тупса тĕпĕпех çапса салатрĕç. Большевиксен парти йĕртсе пынипе, халăхăсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ йĕртсе пынипе пирĕн çĕршывра çичĕ сехетлĕ ĕçкунне пурнăçа кĕртсе çитернĕ тата аслă Сталинла Конституцине çирĕплетнĕ.

Çĕр çийĕ улшăнни

ЫЙТУ. Мĕншĕн тĕлĕ-тĕлĕне çĕрте чулла вырăнсем пур?

Колă Клементиев, йĕлчĕк р. „Осоавиахим" колхоз.

ОТВЕТ. Çĕрĕн температури малтан темиçе пин градус пулнă. Ун чухне çĕрĕн çийĕ пĕрĕ пулнă, мĕншĕн тесен вĕри пирки пиммле йăнала тата хытă пулма пуçтарайман. Анчах çĕр пĕрмайăх тĕнче уçăлăхне ăнă салатса тăнă, çавăнпа вăл вăхăт иртнĕ семен сивĕнсе пына. Чи малтан, çĕр шарĕн çийĕнче пиннер градус ăнă чухне те хытма пултарайман йăналасем хытнă. Çак хытнă йăналасем шĕвĕ, вĕри йăлаласем çинче инсе çĕренĕ. Темиçе мĕлйун çул иртсен пĕтĕм çĕр çийĕне хытă йăналасем хуплаç, çак вара çĕр шарĕн чи малтанхи хупăнă пулнă. Çĕрĕн вирăйăн хупăнă пĕтĕмех чулран пулнă. Çĕр сивĕнсе пынă пирки пиммле хуллен пĕчĕкленсе пынă, вăл пĕрĕнçĕ. Çакăн пирки çĕрĕн хытă хупăнă çăвăр вырăнта çурăлнă, шĕвĕк йăналасем çине ĕçкĕ, хăш çĕрте шĕвĕ, вĕри йăналасем хытă йăлаллăн çине пулнă, сивĕнсе пынă çĕрте çăнчĕ пĕр-тумлам шыв та пулман, ун чухне шыв пулакан элементсем водородпа кислород сывлăпăра, атмосферăра пулнă. Çĕр хупни вĕри пулнă чухне çĕр çинче пĕр-тумлам шыв та пулман, ун чухне шыв пулакан элементсем водородпа кислород сывлăпăра, атмосферăра пулнă. Çĕр хупни те, çĕр таврари атмосферăра та сивĕнсе çитсен тин кислородпа водород химилĕ пĕрлешсе шыв пăсĕ пулнă. Малтанхи вăхăтра шыв пăсĕ атмосферăн ун çăлти сийĕсенче анчах тумлам пулса айăлала ӳкнĕ, çак тумлам çĕре çитичченех каялех пăс пулса çулеле хăпарса пынă. Çĕр хупни çетелĕкĕ сивĕнсен тин шыв тумламĕсем çĕре перĕнекен пулнă. Çакăнтан пуласа çĕрĕн чулăл хупни хăвăрт улшăнма пуçлат.

"Сывлăш ăшă чухне унта тĕрлĕ

Ёмётленнё ёмёт ситрё

Кăçал Трак районёнчи сёнёрен организацилене призыв пунктёнче 19/5—16-мёш сулсенче суралнă самăркăсен черетлё призывё пулса иртрё. Призыва килекен самăркăсем пуртe социалисăмла тăван сёршыва стемлёхшён правасёрлăх илсе килекен фашисченчен сыхлама кайма хатёрленe келаса пăрахçç.

Акă Уйăас Йунтапăрăн „Сёнё пурнăç" колхозăн Сентимиров Борис призыва кёрес умён мён калать:

— Епё аттерен пёчикёлех аннене тăлăха тăрса йулнă. Пёчикренех вуша пурнăçна ўснё. Аннерен йалти куштансем сахал мар кулнă. Йалта колхоз организацилесенех колхоза кёрсе пётём чёререн парăнса ёçлесе пытăм. Колхозри йёркеçёлёксемпе, сăтăрçёсемпе пётём вăя хурса кёрешрём. Йунтапăлăх шпионёсем пирён чечекле социалисăмлă сёршыв ине таканнине илтесенех, чунăм тарăхатчё. Хăçан Хёрлё çара кайма вăхăт ситё-ши, теттём. Акă пайанхи кун, епё Совет Сойузён чи телейлёх мăнлё пулса тăтăм. Манăн анне 58 çула ситнё пулсан та Хёрлё çара илме ыйтаçăп. Йурăхлă пулсан Инçетри Хёвелтухăçёнчи граница пăрăр. Епё унта йунтапăлăх шпионёссеме вирлё кёрешмё сăмах паратăп, тет.

Чăнахах та Бориса амăшё нушă пурнăçра пăхса ўстерёç. Вăл хăйён йуратнă ывăлне Совет Сойузне йурăхлă сын тăвассишён тăрăшнă. Пайанхи кун ёмётленнё ёмёт куç умнех килсе тухрё. Борис призыва кёме йурăхлă сын пулнă. Анчах унăн амăшё ватă майёне, „сана ăготă парапăр, ватă аьăна пăхас пулать", тесё пёлтерçё Бориса призыва кёрсен.

Борис çакна илтсен вăрăмăн сывласа илчё те: епё Хёрлё çара кайнăшăн анне çав тери савăнать. Вăл колхозра пурăнма пултарать. Епё кăçал ёçлесе илни те аннене виçё çул симе çитет. Кунсăр пуçне колхоз та пулăшма пултарать. Маларах

Кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕçе вăйлатмала

Йĕнчĕк районĕнчи „Канаш" колхозри хур фермин (фермă пуçлăхĕ Йăковлев Йуатан) тунăшĕсем сулăран сулăс ӳссе пыраççĕ. 1935 султа фермăран 6500 тенкĕ, 1936 султа—7200 тенкĕ тупăш илнĕ. Кăçал фермăра мĕн цурĕ 553 пуç хур чĕпĕн кăларăл, вĕсенчен 550 пуç ӳстерçе сиктĕрнĕ. Шăхасан районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăрăхăн колхозăн, чăх-чĕн фермине, ĕçе тĕрĕс йĕркелесе пынине, йулашки виçĕ сул хушшинче тупăшсене ӳстерех пыраççĕ. Кашни чăхăран султалăк хушшинче вăтамран 67,3—81,5 çăмарта илнĕ. Кăçал тухнă чăх-чĕпсенчен çĕнтăберĕн 1-мĕшĕне 92 процента йăхăн пăхса ӳстерĕ.

Çак тĕслĕхсем пирĕн республикăра чăх-чĕн тата хур-кăвакал ĕрчетесе вĕсевлен пысăк усă курма май пуррине кăтартаççĕ. Анчах ку тарана сити килти кайăк-кĕшĕке ĕрчетес ĕç чăтма çук кайа йулса пырат. Чăх-чĕн ĕрчетес ĕç-кайа йулса пыни колхозниксем хăйсен хуçалăхсенче чăх, хур тата ытти кайăксене сахал усранинчен тата колхозсенчи фермăсенче чăх-чĕн шучĕ сахалланăн ӳсиничен пулмалă килет. 1936 сулăн йăнварĕн, пĕрремĕшенчен пуçласа 1937 сулхи йăнварĕн пĕрремĕшне ситтичен чăх-чĕн шучĕ 4092 пуç йăхăн чăкăна. Чăх-чĕн шучĕ чакни вăл инкубатăрăн станцăсенче тата фермăсенче ĕçлекенсем хăйсен ĕçĕсем тăрăпе пăхниччен çеç килмĕ пултарнă. Ăратăлмултăра чăхсене кĕркунне сителлĕ суйласа хăвармасăр плансене чакарса ĕçĕн ӳсемлĕхне чарса пыни. Трак районĕнчи Унăк Çум ялĕнчи колхозăн чăх-чĕн ферминче иртнĕ кĕркунне ватă чăхсемпе 30 процента йăхăн ватан суйласа хăварнă. Кĕтӳре ватан нумай хăварни апата сайă йăнине чăхсен продуктивлăхне нылăх чакарнă. Станханăлта норма тăрăх кашни чăхран сунталăк хушшинче вăтамран 250 çăмарта намеле пулнă пулсан, 36 çăмарта çеç илнĕ.

Районсенчи сĕрĕç пайĕсĕнче ку ĕçпе ĕçлекенсем ăратлă чăхсен çывăхĕнче çитĕнӳсем тăвасси тăрăшăмăн.

Ăнчах урса кайнă буржуаллă националисссем хăйсен сăтăрла ĕçĕсене тума пăрахмаççĕ. Вĕсем—хватерсенĕ йăпăхтарса йăма тăрăшаççĕ. Хăшĕпĕрисем хватер кӳçи тӳлемесĕр тăраççĕ. А. И. Иванов буржуалла националис арăмĕ кооператив йăвăçисене сăтăрлама тытăннă. Вăл йӳрийех кооперативăн пахчинчи паха йăвăçисене хăйĕн качакисене кăшлаттарать.

Кооператива тăшмансенчен тасатас тĕлĕшпе правлени пĕр утăм турĕ. Анчах „епĕр кооператива тăшмансенчен тасатăпăр", теме интерехха. Кооперативра Н. П. Неверов, Ф. Т. Тимофейев халăх тăшманĕсем пурăнаççĕ. Ку тăшмансем çинче чарăнса тăмасан та йӳрĕ. Вĕсем тăшманла ĕçĕсем çинчен хăçатсенче çырса кăларнă. Ку тăшмансенчен кĕске вăхăтрах тасалмала.

Кооператив правленийĕ умĕнче тăракан задачă, вăл—кооператива тăшмансенчен тасатса, çĕнĕ суйлав тĕлĕпе хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетесси пулать.

П. Перлов.

Суртйĕр кооперативĕнчен халăх тăшманĕсене тасатмала

Сталинла Конституци кооперативлă организацине те ССР Çыхăвĕн Аслă Совечĕн çитес суйлавĕнче кандидатурăсем тăратма права панă. Кооперативсем-калама çук пысăк ĕçе хутшăнаççĕ.

Шупашкарти суртйĕр тăвакан кооперативра буржуалă-националиссем—халăх тăшманĕсем йăвă хывнă. Кунта А. И. Иванов, Н. К. Кириллов, Т. М. Матвейев, Берман, Ерле, Гальченко, Неверов, Ф. Т. Тимофейев тăшмансем чи лайăх хватерсенче 3-шер пӳлĕм йышшисене пурăнаççĕ. Берман тăшман кооператив правленийĕн кандидатне те кĕрсе вырнаçнă. Правлени председательĕ—пуп ывăлĕ Заполъски тăшмансене вăхăтра палăлъски ĕçĕнче хӳтĕленĕ. Берман тăлтăмана хăй патне ĕçе илнĕ. Ку та сахал. Заполъски правлени председательĕ пулса ĕçлене вăхăтра пĕтĕм кооператив ĕçне йăпăхтара йăнă, кооператив членĕсен пухăвĕ хушшисене пурăнăмасăр тăнă.

Кооператива тăвакан 12 хватерлĕ сурта кăçал туса пĕтермелле пулнă. Вăл ку сурта тăвассишен тăрăшман. Заполъски ĕçлеме тытăннă тĕле сурта кулăпала пĕтерпĕ пулнă, халĕ те çавах. Заполъски ĕçе организациленĕ пиркийĕн çĕнĕ сурт тума пăнă виççемĕш кварталти лимита, 20 пин тенкĕ укçана, Мускава кайала йăмала туна. Çав вăхăтрах халĕ правлени сурта туса пĕтерме Мускавран 112 пин тенкĕ укçа илтăт.

Суртйĕр тăвакан кооперативра членра тăнан çынсем 50 çынна йăхăн пурăнаççĕ. Ку çынсене тахçанах кооператив хватерĕсенчен хăваласа кăларма пулнă. Заполъски вĕсене йӳрийех тытса тăнă. Ун шучĕпе, кооператив хватерĕсенче ташман пурăнсан та, айăкран пынă çынсем пурăнсан та çавах. Ăхăлтен мар вăл: „хватер манăн, епĕ хуçа, мĕн тăвас килет-çавна тăватăп" тесе шутлать. Вăл кооператив социалисăмла харпăрлăх пулса тăнă çинчен манса кайнă.

Кооперативра тĕрлĕ массăлă комиссисем (куçăткомисси, санитари комисси т. ыт.) тунă. Заполъски ку комиссисен ĕçĕсене йĕртсе пымаи.

Суртйĕр тăвакан кооператив правленийĕ ку йĕркесĕрлĕхсеме килĕшме пултарăмасăр. Правлени Иванова, Кириллова, Матвейева, Еллене, Бермана, Гальченкона—халăх тăшманĕсене кооператив членĕнчен те, хватерсенчен те кăларса йăма йышăнчĕ. Ку постановленине тăшмансене ӳстĕлесе тăнă, кооператив правлени ĕçне йăпăхтарса йăнă Заполъскине правлени председательĕнчен хăтарса, йăна правлени членĕнчен хăтарасăн çинчен кооператив членĕсен пухăвĕнче ыйту лартма йышăнăнă. Пĕтĕм кооператив членĕсем ку постановленине хапăлласа йышăнаççĕ.

Испани халăхĕн фашисăма хирĕçле кĕрешĕвĕ. КЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республикă утлă çарĕн отрячĕ хĕвелтухăç фронтĕнче.

(Сойузфото).

Манчжурире Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешни

ЛОНДОН. 13/X (ТАСС). Англири Рейтер телеграф агенстви Бейпири корреспонденчĕ, тĕрĕс пĕлетĕн тесе, çирĕплетсех Манчжурире лару-тăру пит çивĕчлесе пырат, тесе пĕлтерет.

Йапони пуçлуса тăнине хирĕçле ӳхăм çурçĕр Манчжурире уйрăмах хытă сарăлна. Унта Квантун çарĕн (Йапонии Манчжурине окупаци тăвакан çарĕ) йулашки вăхăтра çĕр пин ытла çынлă çар йамала килнĕ. Манчжурири партизанла çарсенче 100 пин ытла боец шутланать, вĕсем Манчжурири (Манчжоу-Го) халăхи режима хирĕç кĕрешеççĕ.

Партизанла отрăмăсем кĕрешнипе, çурçĕр Манчжурири нумай районсем центрти влассен контроленчен хăтăлнă. Манчжурире Йапонийĕн хирĕç кĕрешӳ хĕл вăхăтĕнче татах вăйланнаса кĕтмелле, тесе çырат Ӳлашкинчен Рейтер агенстви корреспонденчĕ.

Азербайджанри çĕнĕ куҫтурă çурчĕсем

БАКУ, октябрĕн 14-мĕш (ТАСС). Азербайджан ĕçхăлăхĕ Аслă социалисăмла Октябрĕ революци çирĕм çул тултарнине çĕнĕ куҫтурă тата йăла учреждениесем уçнине кĕтсе илет.

Артем утравĕнчи нефт кăларакан рабочисем праçник вăлăри парне куҫтурă дворецĕ илеççĕ. Дворецĕ тума мелĕпе çурă тенкĕ укçа йăнă. Виçĕ нефт кăларакан районра клубсене çуçассине октябрь уйăвĕччен тăсăл.

Шувăнăнă дачăлă вырăнта Каспи параходствинчи йывăр çын пулнă работницăсем валăри канмала çурт уçнă. Айăкри разведкă промыслисенче çĕнĕ ача йăслисем-тата Нагорнă—Карабăх автономла облăçĕнче виçĕ йалта çĕнĕ йăслисем уçнă.

Бакун çĕршĕр ĕççыннисем — нефт кăларакан рабочисем, трамвай çинче ĕçлекенсем, врачсем, артиссем, аслă праçникне çĕнĕ çурт-сене уйăвлаççĕ.

Валенсине Китай делегацийĕ пынă

ВАЛЕНСИ, октябрĕн 14-мĕш (ТАСС). Валенсине республика правительстви чĕнинпе Китай делегацийĕ пынă. Делегаци ăшшĕне Йан Ху-чен генерал, икĕ китай офицерĕ, савнашкалах тата китай çарĕн ретне кĕрекен сакăр китай студенчĕ пур. Делегаци Испани халăхĕн фашисăма хирĕç пыракан кĕрешĕвĕпе паллашас майпа пынă.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

„Колхоз пурлăхне тĕкĕнме йурамаст"

Çĕнтăберĕн 28-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ" хăçатра Малти Ҫăлкапри „Октябрĕ" (Елĕк р.) колхозри йĕркесĕрлĕхсеме колхоз председателĕне Скворцовăн сăтăрла ĕçĕсем çинчен сырнăччĕ.

Çак заметкă тăрăх Елĕк районĕнчи сĕрĕç пайĕ вырăна тухса тĕрĕлесе. Хăçатра сырнă фактсем пурте тĕрĕс пулнă. Скворцов колхозăн пурлăхне салатса сăтăрла ĕçе тунине халăх тăшманĕсен ĕçне тунине вырăнне хурса, ăна айăплама ĕçе районти прокурор аллине паме, тесе пĕлтерчĕ райĕсĕрĕç пай пуслăхĕ.

„Намăса пĕлмеççĕ"

Авăр Çырмари „Дружба" колхоз правленийĕ (Вăрман р.) 1937 çулта патшалăха сĕт-çу парассинчен пăрăнса йулма шутланă. Колхоз 9 пус ĕне сăват пулсан та „сумали 5 ĕне çеç", çав 5 ĕне 2100 литр сĕт парат тесе суйа сведени тăратнă. Колхоз председателĕ Андрейĕв намăса пĕлмесĕр патшалăха ултăлат, тесе çырнăччĕ пĕр колхозник.

Ку заметкăна Вăрман райĕсĕтăвкомне тĕрĕслеме йăнăччĕ. Заметкă тĕрĕс пулнă. Унта кăтартнă çитменлĕхе пĕтернĕ, тесе пĕлтерчĕ райĕсĕтăвком председателĕ.

ТЕМТЕПĔР

Самоҫот пăрланма пуçланине систерекен прибор

Подъарти дотчикшĕн самоҫот пăрланма пуçланни малтанхи самантне асăрхаса илни питĕ пысăк-вырăн йышшăса тăрат. Çака вăл самоҫота хăйĕн аэродинамикăлă пахалăхĕсене сухатиччен хăрушă вырăнтан урăх сĕре илсе тухма кирлĕ.

Пĕтĕм Совçаюри Арктика институчĕн пăр лабораторийĕнче самоҫот пăрланма пуçланине систерекен çĕнĕ приборпа опытсем туса пăхнă (изобретени автăрĕ —В. Черныш йуатан). Самоҫот пăрланма пуçласанах, пилот кабинăнче сигнал паракан хĕрлĕ лампăчка сутăлса кайат.

(„Ленинградская Правда").

Велосипед моторĕсем

Рыбинскри Павлов ячĕпе тăракан савăтри ФЗУ шкулăн мастерскойĕнче велосипед валăри пĕчĕк моторсем туса кăларма пуçланă. Малтанхи моторсене сăпаса пăхсан, вĕсем пысăк пахалăхпа ĕçлени курăннă. Халĕ вĕсене масăллăн туса кăларма пуçланă. Иртнĕ сентябрь уйăхĕнче 200 велосипед моторĕ туса кăларнă.

(„Северный рабочий").

Шпион тытнă

Борисоглебск станцинче 68-мĕш номерлĕ пассажир пуйăсĕн пĕр вакунĕ çинче темле пассажирка кĕрсе ларнă. Проводница Шлепина йуатан çав пассажирка шанчăкăр сыр иккенне туйса илнĕ. Кăçхине пуйăс канăн чарăнса тăмассеренех пассажирка вакун çинчен тухнă та, станцинче пиçĕ хытă сăнанă.

Скощовă проводницăпа пĕрле Шлепина йуатан çав шанчăкăр пассажирка хыççăн асăрхасах тăнă.

Сталинград станцинче палламах ăна хĕрăмăма тата ӳна пĕрле пыракан икĕ арçына тытнă та, Шлапти ĕçсен халăх комиссариачĕн органĕсен аллине панă.

Çав пассажирсем шпионсем пулнине палăртнă, вĕсем чукунсулăк сине шпионла заданисемпе пынă. Вĕсем сумĕнче хăшĕпĕр кĕпĕрсен, станцисен тата Сталинград чукунсулăк чĕртӳжĕсене тупнă.

(„Гудок").

Пĕрремĕш Петр пурăннă суртра

„Петр 1" кинокартинăна экран çинче кăтартма пуçланă май, ĕскусрсентсем Ленинградри 1-мĕш Петр пурăннă суртпа пысăкăн интереслеме пуçланă. Вăл сурта 1703 султа июньĕн 26-мĕшĕнче тунă, вăл хулари аваллăх сооруженин пулса тăрат.

Суртăн тулă ĕнне чулпа витнĕ. Халăхăн вăхăтра кунта пысăках мар музей тунă. Музейа пумайах та пулмасăр хаклă ĕкспонатсем илсе пынă. Кунта Петр вăхăтĕнчи аваллăх гравюрăсен ӳкерчĕкĕсем пур, сăмахран: „Полтавская баталия", „Морская баталия бликъ Гангута", „Ввод пленных шведских фрегатов в Петербург в 1720 году". Ăсĕмсĕр пуçне тата музейа Петр портретне илсе пынă. Вăл портрета паллă мар мастăр ХVIII-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи сурăнче ӳкернĕ. Çавăн пекех Петербург хулине эскизламалли план пур, план çине „1720 çул" тесе палла тунă.

Музейа пыракансем Петр Нева çинче ишнĕ кимĕне, Петербург строительствин малтанхи сулĕсене кăтартакан гравюрăсене, хула строительĕсем тертленсе пурăннă сăрмунчасем макечĕсене интереслеме пăхаççĕ.

(„Рабочая Москва").

Пултарулă хĕрача

Кăçал йăнвар уйăхĕнче пуласа иртнĕ самăрăсен пултарулăхĕн обласри смотрĕнче Тамбăри музыка шкулĕнче вĕренекен Голубева Маргаритăна преми панă. Халĕ ăна пысăк талантла хĕрача тесе Мускаври государствăй консерваторийĕ сумĕнчи вунă çул вĕренмели мусăк шкулне вĕренме илнĕ.

Голубева Маргарита халĕ çичĕ çулта çеç-ха. Конкурсра вăл Бах çырнă „Менует" произведенине, хăйĕн ровалъне выльма çырнă „Гроза" тата „Золотая рыбка" произведенисене пиçĕ аван выльăса панă.

(„Коммуна").

Чингис-Хан воинин колăчуги

Хĕвелтухăç-Казахстан облăçĕнчи Песчанăк поçолки патĕнче Жуковă колхозниçи тимĕр укăсенчен авса çыхнă колăчуга тупнă. Вăл 8 килограм туртат. Ку колăчуга Чингис-Хан воинин пулнă пулĕ, тесе шутлаççĕ. Ку йăпăлана Мускаври истори музейне йăнă.

(„Казахстанская Правда").

Почтă маркисен патшалăх коллекцийĕ

Ленинградри сыхăну музейĕнче почтă маркисен патшалăх коллекцийĕ пур. Ку ССР Сойузĕнче пĕртен-пĕр коллекци шутланать. Пĕтĕмпе унта 65.000 марка, вĕсенче мĕн пур патшалăхсенен пустарса, 45 питĕ пысăк том тунă. Çав коллекцин хăйĕн пысăкăшĕпе тата пуйăнăхĕпе тĕнчери 5 коллекцинчен пĕри пулса тăрат. Йулашки вăхăтра патшалăх коллекцийĕ валăри Монголие Тувин халăх республикăсен маркисене илсе килнĕ.

(„Красная газета").

Ответлă редактăр П. И. ИВАНОВ.

Заготзерно Пĕрлешӳвĕн Чăваш республикăнчи кантурне

КИРЛĔ

Шупашкарти кантурĕнче ĕçлеме:

Оперативлă учотăн начальникĕ — 1.
Бухгалтер-ревизор — 1.

Районсенче ĕçлеме:

Пахалăх йенĕпе ĕçлекен технорукеем — 4.
Аслă бухгалтĕрсем—3.

Заготзерно кантурĕнче пăтса пĕлмелле, Калинин урамĕ, 83.

„КОГИЗ-ăн" Шупашкарти уйрăмне

ĔÇÇЕНЕ ТУСА ПЫРАКАН

Васкавлă кирлĕ

Ĕççукçи государствăй нормированиеллĕ тăрах. Ĕçе кĕрес текенсен çак адресене пымала: Шупашкар хули, Горький урамĕ, 3. „КОГИЗ"

Амбарсенчи тырпулсене сийĕн кӳрекен вредительсемпе кĕрешекен комитетăн Шупашкарти Производствăлă участкине

Шупашкарта йалан ĕçлеме

БУХГАЛТĔР ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ

Адрĕс: Шупашкар, Чернышевский урамĕ, 26.

Вăрнарти фосфорит савăтне

Шоферсем, локомобиль машинисĕсем, слесарĕсем тата электромонтерсем

КИРЛĔ

Хватерсем пур

Савăт управленийĕ

ТЕАТР

„Пограничниксем"

Чăваш патшалăх академилĕ театрĕнче сезон пуçланчĕ. Чăваш труппи октябрĕн 14-мĕшĕнче Билĕ-Белоцерковскин „Пограничниксем" йăтлă пиессине лартса пачĕ.

Ку пиесă пире хамăр тăван çĕршывăн чиккинче хурал тăракан патăр пограничниксен пурнăçне кăтартса парат. Сталин йăуташ-калланă пек, капиталисăмлă йĕриташралăх çинчен аса илтерсе, сыхлăха ӳстерме чĕнет, урăхçĕршыв разведкинсен киревсĕр чĕре метăчĕссемпе паллантарат, тăван çĕршыва йуратма вĕрентет.

...Хĕвелăнăç ĕнчи чикĕ. Совет çĕрĕ. Колхозсем, арман. Арман мелникĕн хĕрĕ Лена (артистка М. Иванова) пурăтменне титарăпа каласа ӳрлат. Вăл пограничнике кĕтет. Пограничник Сорокин (артис Алексейĕв) илемлĕ Ленăна тӳсеймесĕр йуратат. Канăçла сехетсенче пограничниксем колхоз хĕрĕсемпе вăйăпа тухаççĕ. Хĕрсемпе красноармейцем арман патĕнче савăнса ташланă вăхăтра, чикĕри заставăра тревогă пулат. Пограничниксем вăйăпа пăрахса заставăна чупаççĕ.

Колхозник маскине витĕннĕ арман мелникĕпе унăн хĕрĕ Лена — пĕр урăхçĕршыв государствăнчи разведкăн агенчĕсем. Вĕсем чикĕри секретсене пĕлес тесе Сорокин пограничникне хăйсем майлă савăрасшăн. Çак тĕллеве пурнăçа кĕртес тĕллĕпе ташмансем чи чĕре метăдсемпе усă курма тăрашаççĕ. Лена пограничникне хăйĕн ӳратуварĕнче ĕлĕртет, мелникĕ (К. Йегоров артис) спирт ĕçтерсе ӳсĕртет.

Анчах Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕрееп тăрăшакан, хăйĕн тăван çĕршывне нимрен ытла ӳратакан пограничник тăшмансен аллине çакланмасăт. Вăл хăй туна йăнăш çинчен (мелник патĕнче спирт ĕçни) сиĕнчех заставă начальникне пĕлтерет. Хăйне валăри çирĕп урок туйăнат. Сĕрле чикĕре тăнă чухне Лена чикĕ урлă каçма тапратсан, Сорокин пограничник хăй малтан çав тери хытă ӳратнă Ленăна пăшалпа персе вĕлерет.

Инкĕре пĕртте лăпкă мар. Капиталисăмла тĕнче социализăм çĕршывне татти-сыпписĕр шпионсем, диверсантсем ӳарат.

Урăхçĕршыв разведкин штабĕнче разведкă капитанĕ шпионсене совет чикки урлă каçма вĕрентет, маскировкă тума çăмăл пултăр тесе шпионсем совет фабрикесенче туса кăларнă спичкă коробкисемпе махоркă пачкисене хăйсемпе пĕрле чиксе килеççĕ. Улпут патĕнче ĕçлекен батрак пек пулаççĕ т. ыт.

Совет пограничникĕсем шпионсемпе диверсантсене пурне те тытаççĕ. Пограничниксем çеç мар, чикĕ тăрăхĕнчи кашни колхозник пограничник шутланать.

Тĕтрелĕ çантăлăкра асăрхăнманнине Коган пограничник чикĕ урлă урăхçĕршыва каçса кайат. Урăхçĕршыв разведки (разведкă капитанĕ—Медников артис) Коган пограничникне етемле мар асаплантарса, кирлĕ сведăнсем ыйтса пĕлесшĕн. Пирĕн пограничник выçăпа касăлтарасăр, аллине алăк хушшине хĕстереççĕ, хĕнеççĕ, укçапа астараççĕ. Анчах Коган (Ӳргалкин артис) тăван çĕршыв ĕçне сутмасăт. Çăлăнма май çуккине кура, вăл разведкă капитанне персе вĕлерет те, Совет Сойузĕ ĕненĕле пăхса: „Сывă пултăр тăван çĕршывăм!"—тесе хăйне хăй пĕрсе вĕлерет. Пиесăра çак вырăн—çав тери вăйлă сцена. Урăхçĕршыв разведкин аллине ăнсăртран çаклланнă Коган пограничникра епĕр пĕтĕм асла совет халăхĕн çулăмлă патриотисăмне, тăван çĕршыва хĕрӳлĕн ӳратнине куратăпăр.

Пиесăра тепĕр вăйлă сцене вăл—шпиона совет следовательĕ допросе туни. Ку сцена капиталисла разведкăн кризисне, совет контрразведкин хăватлине кăтартса парат.

Пиесăн пахалăхĕ ытла та пысăк. „Пограничниксем" пиесăна чăваш театрĕн коллективĕ калама çук усăлă ĕç турĕ.

Артиссем роҫсене тĕплĕн хăтĕрленнĕ пулмала, паха выльăрĕç. Пиесăна витĕр ăнланăн курăнат. Разведкă капитанĕн роҫенчи Медников, шпион роҫенчи Айзман, Сорокин пограничник роҫенчи Алексейĕв, следовательĕ роҫенчи Семенов, застава начальникĕн роҫенчи Фадейĕв, арман мелникĕн роҫенчи Йегоров, Лена роҫенчи Иванова т. ыт. выльăнни—чăваш артисĕсен мастăрăхĕ ӳссе пынине кăтартса парат.

Сезон пуçламĕпе ăнăçлă пулчĕ. Малала та ăнăçлăн выльăма сĕнер.

С. Константинов.

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илмелли хакăсем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха —2 т. 50 пус. Ăçлăхĕнче пайăлă пиçĕççĕ.

Уполномоченный Чувашиздательства № 757. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувкнигиза. Заказ № 2193. Тираж 11165. 1½ печ. л. 82 см. п. л.